кăрăç» тесе ят панă. «Хура кăрăç» тени хăйшĕн çеç пурăнакан, укçашăн çунакан тата чунĕпе хытă çын тенине пĕлтерет. Хайлав ячĕпе унăн тĕп шухăшĕ тата содержанийĕ килĕшсе тăраççĕ.

Повесть вĕçĕнче Крыслов сыватăшра (больницăра) выртнине куратпăр, кунта вăл Ларивап хытă хĕненипе лекнĕ. Сывалса тухĕ унтан та Çемен чиперех. Сывалса тухĕ те тепре авланса ярĕ. Ара, çавăн пысăкăш кил хуçалăхне пĕччен тытса пыма ăна çăмăл пулмĕ. Пурнăç йĕркине те улăштармĕ Крыслов, мĕншĕн тесен вăл тăна кĕрсен врач çăварĕнчи ылтăн шăла тӳрех асăрхать, унăн малтанхи сăмахĕ те «ылтăн» сăмах пулать. Çак пайрăмпа (детальпе) автор вулакана Çеменĕн малалхахи кун-çулĕ еплерех пуласси пирки систерсе калать.

А.В. Емельяновăн сăнар тăвас ăсталăхĕ Çемен сăнарне калăпланинче лайăх палăрать. Çыравçă кăмăлĕпе ун майлă. Хайлаври тĕп персонажăн психологийĕпе шухăш-кăмăлне уçса пама автор хура кăрăç сăнарĕпе вырăнлă усă курать. Иккĕшĕ те вĕсем çирĕп, кӳршĕсемпе хăйсене сăпайлă тытма тăрăшаççĕ. Вĕсен «чĕрĕлĕхне» автор аталанура кăтартать. Анчах пĕри шурă пĕчĕк хуртсенчен пĕтет пулсан, тепри укçапа тупăшшăн тата хыт кукарланса кайнине пула инкек тӳсет. Çапах та кăмпи тепĕр çул та шăтать, Крыслов пурнăçĕ те, йывăррăн пулин те, майĕпен майланса каясси повесть вĕçĕнче палăрать.

Осипов Н.Н.

## МАЛТАНХИ УТĂМСЕМ

**(Хветĕр Уярăн 30-40-мĕш çулсенчи кулăш литературинчи пултарулăхĕ)**

Илемлĕ литература – халăхпа калаçмалли чи лайăх мел. Хăйĕн хайлавĕ урлă çыравçă вулакана мĕнле те пулин ĕç çинчен е тата халăх пурнăçĕнче, çĕр-шывра пулса иртекен вăл е ку пулăм çинчен тĕпĕ-йĕрĕпе туллин пĕлтерет.

Мĕн çинчен тата кам пирки каланине, кам валли тата хăш вăхăтра хайланине, мĕн чухлĕ, епле, кам çырнине кура илемлĕ литература хайлавĕсене тĕрлĕ ушкăнсене уйăрма май пур. Хайлав калăпăшне кура роман, повесть, калав, очерк т.ыт.те теме пулать. Çавăн пекех сăнарсен тыткаларăшĕпе тавракурăмне кура кĕçĕннисем, вăтам çулхисем е аслисем валли çырнă хайлавсем пулаççĕ.

Илемлĕ хайлавсене çакăн пек хакланă май кулăшла хайлавсем текен ăнлав та тĕл пулать. Шăп çак кулăшла хайлавсем çинче чарăнса тăрас килет те ĕнтĕ манăн.

Мĕн-ха вăл кулăш, литературăри кулăш?...

Илемлĕ литература ĕмĕрсем хушши этемлĕхе йăлăхтарман ыйтăва хускатать, ăна тӳрремĕнех пырса тивекен этеплĕх илемне кăтартма, кунччен хине упраса хăварма тăрăшнине, çĕннине шыранине вăл е ку ĕçпе пулăм урлă уçса пама тăрăшать. Литературăра этеплĕх илемĕн пур енне те туллин никама кӳрентермесĕр, тĕрĕсрех, пурне те юраса, пурне те ăнланмалла сăнласа пама, çав

вăхăтрах кашнин кăмăлне тупса ун еккипе кайма пултаракан мелсенчен пĕри вăл – ăшпиллĕ кулă, йĕплĕ тăрăхлав тытăмĕ.

Кулăш вăл этемлĕх пекех тĕрлĕ енлĕ те уйрăм характерлă, унăн çынсенни пекех харкам хăйне кăна пырса тивекен енĕсемпе сăлтавĕсем, мелĕсем пур. Кам камран, мĕнле, еплерех, ăçта, çавăн пекех хăçан, мĕншĕн кулнине кура тĕпчевçĕсем çирĕплетсе юмор, сатира, ирони, вĕсен улшăнăвне (модификацие) пула гротеск, пароди, карикатура пулнине палăртаççĕ. Асăннă тĕссемпе енсене ушкăнласа вĕсен хăйне евĕрлĕхне вырăс тĕпчевçи Н.С. Выгон тĕплĕн тишкернĕ. Çавăн пекех ку ыйтупа А.Б. Есинпа Т.А. Касаткина та нумай ĕçленине, кулăш хăйне евĕрлĕхĕпе тĕсĕсене пур енлĕн туллин тĕпчесинне палăртса хăвармалла. Чăваш литературинче кулăш хăйне евĕрлĕхĕсене П.Н. Метинпа Г.И. Федоров тĕпчевçĕсем тишкереççĕ.

Чăваш литературинче сатирăпа юмор нихăçан та кайри вырăнта пулман. Çапах та хăйĕн тĕп тĕллевне – тӳрĕ ĕçпе пурăнакан халăхпа хирĕçле сăнарсене – бюрократсене, кахалсене, ултавçăсене, йĕркелĕхе пăсакансене, тĕрлĕрен ултавпа суяна тăрă шыв çине кăларассине, вĕсене кулăшпа питлев урлă ăс парассине яланах тĕпе хунă.

Этем пурнăçĕнчи кулăшсене, унăн ĕçри ӳсĕмĕсене, çитменлĕхĕсене, йăла-йĕркери лайăххине начаррине май килнĕ таран тĕрлĕ енлĕ тишкерессине пĕтĕмĕшле литература та яланах мала хунă. Çакна эпир маларах асăнса хăварнăччĕ, анчах сатирăпа юмор жанрĕпе çыракансем хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхпа палăраççĕ. Вĕсем пурнăçра тĕл пулакан макăрмалли е тарăхмалли пулăмранах кулăшла, илĕртӳллĕ, кăсăклă, çав вăхăтрах курайманлăхпа тулнă питлевлĕ произведени йĕркелеççĕ. Кунта çитменлĕхсене ахаль куçпа асăрхакан, сăнлакан кăна мар, калас шухăша сатирик е юморист куçĕпе ӳкерсе пама, сăмаха çивĕч тыткалама пултаракан ăста художник кирлĕ [1].

Çакăн пек художниксенчен пĕри – Хветĕр Уяр – чăваш литератури лаççинче нумай çул хушши тăрăшса пысăк бюрократсемпе ултавçăсене, наянсемпе лӳпперсене вĕри çатма çинче самаях ташлаттарчĕ, пурнăçра тăтăшах тĕл пулакан тĕрĕсмарлăха ăншăн питлекен, çивĕччĕн йĕплекен хайлав хыççăн хайлав калăпларĕ.

Чăваш литературин «шур сухалĕ» пирки сăмах тапратрăмăр пулсан, çыравçă пултарулăхĕн пархатарлă çул-йĕрĕпе тĕплĕнрех паллашар.

Хветĕр Уяр XX ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче, çĕр-шыва революци юхăмĕ кисретме пикеннĕ вăхăтра, 1914 çулта Самар тăрăхĕнчи чăваш ялĕнче кун çути курнă. Хветĕр ӳссе çын пулнă çĕре çĕр-шыв çĕнĕ пурнăçпа, çĕнĕ ĕмĕт-тĕллевсемпе пурăнма ăнтăлнă. «Çĕнни яланах шăл çĕмĕрсе килет», – тенĕ ваттисем. Революци илсе килнĕ çĕнĕлĕх, чăнах та, халăха пурнăç çине çĕнĕлле пăхма хистенĕ. Халăх ирĕке тухса, ирĕклĕ пурнăçпа пурăнма пикеннĕ. 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче тĕттĕм чăваш ялĕсенче те колхозсем йĕркеленме тытăннă. Ку таранччен колхоз, пĕрлĕхлĕ ĕç мĕнне пĕлсех кайман хресченсем çак çĕнĕлĕхе пула кулăшла лару-тăрăва кĕре-кĕре ӳкнĕ. Халăхра колхозпа çыхăннă пăтăрмахпа путишле ĕçсем çамрăк Хветĕр куçĕ умĕнчех пулса иртнĕ. Çакна вăл каярахпа хăйĕн хайлавĕсенче кăтартса панă. Вĕсенче хресчен пурнăçне витĕр курса тăнă çыравçă нумай шухăшлакан, иккĕленсе тăракан,

мĕскĕн, çав вăхăтрах пултарулла ял çыннисен айванлăхĕнчен шахвăртса кулать. 30-мĕш çулсенче Уярăн сатира хайлавĕсем тĕрлĕ кĕнекесемпе журналсенче кун çути курăççĕ.

Çырмашкăн та Хветĕр Уяр халăхшăн çывăх та ăнланмалла жанртан – сатирăран пуçланă. Унăн малтанхи кулăшла калавĕсемех вăл питех те кирлĕ ыйтусене хускатма пĕлнине кăтартса панă.

Çыравçăн пичетленсе тухнă пĕрремĕш сатирăллă калавĕ – «Майне пĕлмесĕр» (1930) – тăмсайла ĕçлекенсене хытă тивертет. Ырă тĕллевпе пуçланă ĕçех, майне пĕлмесĕр, пăсса хума пулать иккен.

Çамрăк сатирик хăйĕн хайлавĕсенче кирлĕ ыйту нумай хускатнă. Çивĕччĕн тăрăхласа кулать вăл колхоза кĕмен «инхозсенчен» («Пурăнма пĕлмен çын»), суя «чир» тупса кахалланса, колхоз ĕçĕнчен пăрăнса çӳрекенсенчен («Пĕри те юлман»), хут пĕлмесĕр тĕн серепине лекнĕ хĕрарăмсенчен («Никам та юлман») [2].

1930-мĕш çулсен вĕçнелле Уяр пултарулăхĕнче ăшă кулăш, юмор палăрать. Совет çыннисен тĕлĕнмелле ырă енĕсене кăтартса çемçен те ăшшăн кулать вăл. Тĕслĕхрен, сухаллă мучисем урайне Китай картти сарса хунă та унти вăрçă ыйтăвĕсене çар пуçĕсем пек çĕрĕ-çĕрĕпе сӳтсе явăççĕ («Ăнсăртран итленĕ калаçу», 1939) [3]. «Чĕмере Павăлĕ» (1938) калавра сатира та, юмор та, психологилле сăнлани те пур. Колхоз тулăшне тăр пĕччен тăрса юлнă Чĕмере Павăлĕ пуп ывăлĕпе калаçнă хыççăн «тăна» кĕрет. Пуп ывăлĕпе пĕр лав çинче ларса пыни те уншăн киревсĕр ĕç тунă пекех туйăнса каять. Вара вăл ăна хăйĕн лавĕ çинчен антарса хăварать. Çак пăтăрмахлă калаçу хыççăнах Павăл колхоза çырăнать.

Уяр сатирик колхоза кĕме тăхтаса тăракан çынсен шухăшкăмăлне витĕр курса тăнă, вĕсене канăççăрлантаракан ыйтусен тупсăмне пĕлнĕ. Хресченсем саманана, влаçра ларакансене шанмасăр вăл е ку утăма тума тăхтаса тăнине пĕтерес тесе нумай тăрăшнă. «Ик Ăрахман пĕрне-пĕри пăрахман» калавра («Йĕплĕ калавсем», 1941) автор колхоза кĕме тăхтаса тăракан Кĕске Ăрахман куçĕ еплерех хĕнпе уçăлнине кăтартса панă. Ачаран пĕрле ӳснĕ, пĕрпĕрне çур сăмахран ăнланма хăнăхса çитнĕ икĕ хресчене колхоз текен пĕрлĕх уйăрса янă. Вăрăм Ăрахман пĕрлешӳллĕ хуçалăха çырăнсан Кĕске Ăрахман унпа калаçми пулнă. Унăн чĕринче шанманлăх хуçаланнă. Иккĕленĕве сирес тесе Кĕске Ăрахман ял-ял тăрăх тухса кайнă, çул çинче тĕрлĕ пăтăрмах курса пĕтнĕ. Çулçӳрев Ăрахман мучин куçне уçнă, вăл ачаран пĕрле ӳснĕ тусĕн хăтланăвне колхоз кӳнĕ çĕнĕлĕх урлă (кӳршĕ ялти колхозниксен пурнăçне курнă хыççăн) ăнланса илнĕ. Икĕ уйрăлми çемьене колхоз малтан уйăрса ярса унтан каллех çывăхлатнă.

Çĕнĕлĕхпе килĕшмесĕр, хăйсемшĕн çеç хыпкаланакан çынсене питлес кăмăл Уярăн çав тери пысăк пулнă. Унăн сатири, социаллă-политикăлла ыйтусем хускатса, шăллă, хаяр сатира пулса тăнă, çĕнĕ пурнăça çирĕплетме пулăшнă. Тутар ялĕсенче колхозсем йĕркеленнĕ хыççăн та уйрăм ĕçе, хальхи пек каласан, «шапаша» çӳрекенсем тупăнкаланă. Пĕрлешӳллĕ ĕçре хăйĕн вырăнне тупаймасăр ял-ял тăрăх хăма çурса çӳрекен пĕр тутар эртел пухма тухнă. Анчах та колхоз уссине туйса илнĕ ял халăхĕ текех «шапаша» çӳреме килĕшмест, пу-

шă ял урамĕне (халăх пĕрлешӳллĕ ĕçре) çын шыраса çӳрекен «шапашник» текех халăха хăйпе илсе çӳреме çуккине ăнланса илет. Унран ватти те, вĕтти те тăрăхлать, ютшăнать («Иртен-çӳрен»).

Колхозсем йĕркеленĕ чухне халăха пăтратакан, йăнăш çул çине тĕксе яракан йăх-яхсен, урăхла каласан, кулаксен айванлăхĕнчен те култарать ăста сатирик. Кулаксем халăха шăнман пăр çине лартса хăварма тăрăшса хăйсем çав пăр çине ларса юлаççĕ. «Силос тăвакансем» (1931) калавра кулаксем комсомолецсене чике тăршшĕ лартма хăтланаççĕ. Шыçманпа Чăсман силос валли шăтăк чаваççĕ, тĕрĕссипе, шăтăка хăйсен туприне, пуянлăхне пытараççĕ. Анчах комсомолецсене хывăхпа улталаймăн: вĕсем кулаксен киревсĕр ĕçне тăрă шыв çине кăлараççĕ.

«Шăтăр-р! тутарнă шăлĕсене выçă кашкăрсем пек икĕ кулак. Анчах шăлĕсем хăрса çитнипе шăкăрах хирĕлсе ӳкрĕç», – юлашкинчен уççăн та çĕнтерӳллĕн кулать калавçă, Иван Мучилле ахăлтатса [4].

Чăн пурнăçра пулса иртекен кулăшла ĕçсем çамрăк сатирикăн ăсталăхне ӳстерме çул уçса пынă. Çӳлерех илсе кăтартнă тĕслĕхсем пек ĕç-пуçсем тĕттĕм чăваш ялĕсенче темĕн чухлех пулнă. Çавăнпа та Хĕветĕр Уярăн кулăш ăсталăхĕ 1930-1940 çулсенче хăвăрт аталаннă. Вăл халăхшăн сивлек сăнарсенчен йĕрĕнсе кулнипе кăна çырлахмасть, вĕсен психологине, моральпе этика хăйне свĕрлĕхне пурнăçри пекех çырса пама тăрăшать. Ку, паллах, писателĕн çырас пултарулăхĕ, ăсталăхĕ ӳссе пынине кăтартса парать.

«Çăл» (1940) калаври колхоз председателĕ Ăрахман типĕ айлăмра артезиан çăлĕ чавтарас шутлă. Вăл çав нушапа райзо пуçлăхĕ Заливайкин патне çул тытать. Заливайкин Роман Ивановича чаплăн кĕтсе илет, çуллă калаçать. Сăмах çăл чавас пирки тапрансан хайхи Заливайкин бюрократ часах шăпшанать. Унăн ытти, халех татса памалли ĕçсем чылай иккен, вăл колхоз председательне урăх пуçлăх патне «хăвалать». Лешĕ хăй пекех конторист пулнă иккен. Çӳлте ларакансем пурте сăмахпа ырă. Ĕçĕ вара ниепле те вырăнтан хускалмасть. Çавăн йышши икĕ питсенчен пулăшу кĕтсе илеймессине сиссе Ăрахман мучи парти райкомне каять – райзо кантурне бюрократсенчен тасатаççĕ. Уйра тинех артезиан çăлĕ чавма тытăнаççĕ.

Куратпăр ĕнтĕ, Хветĕр Уяр тĕрĕсмарлăха чăтма пултарайман çыравçă пулнă. Унăн çивĕч куçĕ тĕлне лекнĕ ултавçăсемпе суççĕсем, икĕ питсемпе йăпăлтисем, куштансемпе сĕмсĕрсем сатирикăн йĕплĕ сăмахĕсенчен хăтăлса юлайман. Вĕсене, пăтранчăк шывра пытанса пурăнас текенскерсене, çамрăк çыравçă тăрă шыв çине илсе тухатьтухатех, кусем пăтранчăк шывра темле пытанса пурăнас тесен те.

ЛИТЕРАТУРА

1.*Алимасова Г.И.* Хветĕр Уярăн деталь ăсталăхĕ //Ялав. – 1994. – 9 №. – 59-62с.

2. *Григорьев Н.Г.* Пархатарлă сăнар, сăнарлă чĕлхе. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1990. – 86-101 с.

3. *Метин П.Н.* Комическое в чувашской литературе. – Шупашкар: ЧППУ, 2002. – 320 с.

4. *Федоров Г.И.* Художественный мир Ф.Уяра. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1991. – 140 с.

5. *Хлебников Г.Я.* Проза ăсти // Мреслетпе ăсталăх. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1984. – 230 с.